# ҪАҪ ПУЛЧЁ, ТЁТТЁМ ПУЛЧЁ






Пир[ĕ]н тăвансен ялан[ах] сăра пур,
ăна ĕçме ялан эпир пур;
каç пулчĕ, тĕттĕм пулчĕ, хăратăп,
ăсатса яр, тăван, каятăп,
каç пулчĕ, тĕттĕм пулчĕ, хăратăп,
ăсатса яр, тăван, каятăп.

Пир[ĕ]н тăвансен сĕтел тулли çимĕç,
ăна çиме ялан эпир пур;
каç пулчĕ, тĕттĕм пулчĕ, каятăп,
ăсатса яр, тăван, хăратăп,
каç пулчĕ, тĕттĕм пулчĕ, каятăп,
ăсатса яр, тăван, хăратăп.

Пир[ĕ]н тăвансен така шўрпи пур,
ăна çиме ялан эпир пур;
каç пулчĕ, тĕттĕм пулчĕ, хăратăп,
ăсатса яр, тăван, каятăп,
каç пулчĕ, тĕттĕм пулчĕ, хăратăп,
ăсатса яр, тăван, каятăп.